# Ваҫлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ



Василий Иванович Давыдов-Анатри 1917 ҫулхи раштавӑн 26-мӗшӗнче хальхи Патӑрьел районӗнчи Аслӑ Арапуҫ ялӗнче ҫуралнӑ.

Республикӑри хаҫат шкулне, учительсен институтне пӗтернӗ. 1940—1941 ҫулсенче Хӗрлӗ Ҫарта пулнӑ, унтан таврӑнсан Первомайски районӗнчи «Коммунар» хаҫат редакторӗнче, КПСС Чӑваш обкомӗн инструкторӗнче, Чӑваш АССР Министрсен Совечӗн Радиоинформаци комитечӗн тӗп редакторӗнче, Чӑваш кӗнеке издательствин редакторӗнче, Чӑваш писателӗсен союзӗн илемлӗ литературӑна пропагандӑлакан бюро пуҫлӑхӗнче ӗҫленӗ.

Поэт 50 кӗнеке ытла пичетлесе кӑларнӑ. Чӑваш композиторӗсем унӑн сӑввисемпе пилӗк ҫӗр юрӑ, юрӑпа ташӑ сюитисем, ораторисемпе кантатӑсем, опера ҫырнӑ.

Раҫҫей Федерацийӗн культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, чӑваш халӑх поэчӗ, Шупашкар хулин хисеплӗ гражданинӗ, Халӑхсен туслӑхӗн орденӗн кавалерӗ.

1958 ҫултанпа СССР писателӗсен союзӗнче тӑнӑ.

Поэтӑн чи паллӑ кӗнекисем: «Пӗчӗк туссем», «Чӗре хушнипе», «Чеменпе Мерчен», «Илемпи», «Телейпе туслӑх», «Шурӑмпуҫ хӑпарсан» т.ыт.те. 2010 ҫулта ҫӗре кӗнӗ.

---

## САВНӐ ТУСӐМА

Ҫутӑ кӗмӗл сывлӑм
Ӳкнӗ таврана.
Ирхи уҫӑ сывлӑш
Ачашлать чуна.

Вӑштӑр кӑна вӑштӑр
Ӑшӑ ҫил вӗрет,
Тусӑм евӗр вӑрттӑн
Чуптуса илет.

Сад пахчи пит капӑр,
Ларнӑ чечеке.
Юрлать тапхӑр-тапхӑр
Унта сар пике.

Манӑн шухӑш-кӑмӑл
Унпала ялан.
Ӗҫлеме те ҫӑмӑл
Чун савни пулсан.

Пурнӑҫӑмӑр селӗм —
Ешӗл ҫуркунне.
Юрлар,
сар пикеҫӗм,
Савар пӗр-пӗрне.

Ҫутӑ кӗмӗл сывлӑм
Ӳкнӗ таврана.
Эп сунатӑп ырлӑх,
Тусӑмҫӑм, сана.

## АТТЕ-АННЕ ҪУМНЕ ЛАРСАССӐН...

Ӳссе ҫитсен,
ҫунат сарсассӑн,
Ҫӳле вӗҫессӗн туйӑнать,
Тӑван анне
ҫумне ларсассӑн
Чӗре хӗрӳллӗнрех тапать.

Ҫурхи кунсем
йӑл-йӑл кулсассӑн
Уйра янрать тӑри сасси.
Тӑван атте пӗрле пулсассӑн
Ӑнса пырать суха касси.

Илем кӳрсе ҫуретӗр пӑчӑр
Кӗрхи вӑрман уҫланкине.
Тус-тантӑшсем,
нихҫан ан пӑсӑр
Атте-аннемӗр кӑмӑлне.

## ЧĂВАШ ТĔРРИ

Мĕнле пуян чăваш тĕрри, —
Унта пин-пин çулсен йĕрри,
Унта хăват илет çĕнни,
Çынсем ĕмĕртенпе кĕтни.

Мĕнле хитре чăваш тĕрри,
Ун курăнмасть вĕçĕ-хĕрри.
Унта асамлă çăлкуçсем,
Илемлĕ çутă çăлтăрсем.

Мĕнле чипер чăваш тĕрри,
Унта маттур хĕрсен çĕрри.
Унта шур хурăнсен ĕшни,
Унта шур акăшсем вĕçни.

Мĕн авалтан чăваш тĕрри
Хĕвеллĕ, хўхĕм çав тери.
Унта тăван ял-йыш сасси,
Хирти ака-суха касси.

Мĕнле хитре чăваш тĕрри, —
Унта çынсен хĕрў чĕри,
Яш-кĕрĕмсен паха парни,
Çĕршыв анне çунат сарни.

Мĕнле пуян чăваш тĕрри, —
Унта пин-пин çулсен йĕрри.

## ЧАЙХАНА

Кĕтсе илтĕн мана,
Чайхана.
— Лар эс, — терĕн, — хăна,
Сулхăна.
Чашкăрать сăмавар,
Тухать тар.
Чипер симĕс чинар,
Чаршав кар.
Кĕр-кĕрлет ман умра
Бухара.
Тус-юлташăм Мухтар,
Чей тултар.
Сиплĕх куртăм кунта,
Тупата.
Тайма пуçăм сана,
Чайхана!

## ТĂВАН ХАЛĂХĂМА

Тăван халăх енне пуç тайса
Эп утатăп çаплах малалла,
Мирпе туслăх çинчен шутласа
Çĕклес тетĕп мĕнпур вăй-хала.

Тăван халăх, эп сан ывăлу,
Эс ўстертĕн, эс шантăн мана
Умăмра — çĕнтерўллĕ çулу,
Нихăçан сухатмастăп ăна!

Тăван халăх, эп ĕмĕр санпа.
Юлас марччĕ кун-çул уттинчен.
Чун хавалĕ пĕрле çĕршывпа
Вут чĕреçĕм таппи сўниччен.

## ХУСАНКАЙ

Хусанкай хайĕн пĕтĕм вайне,
Çăлтăр пек çуталан ăс-халне,
Пархатарлă хĕрў пурнăçне
Парнелерĕ тăван халăхне.

Хусанкай тăван халăх ятне,
Илĕртўллĕ чĕлхе илемне,
Ун сăваплă сўнми хăватне
Илсе тухрĕ тĕнчемĕр умне.

Хусанкай пиллесе хăварни,
Унăн хаклă, асамлă парни
Нихăçан тухас çук асăмран, —
Ăна уншăн тавах чун-вартан!

Хусанкай чунĕпе, ĕçĕпе,
Янăравлă сăвви-юррипе
Юлчĕ пирĕн пин-пин чĕрере,
Юлчĕ пирĕн асра — ĕмĕре!

## ХĂНА ЮРРИ

Хитре çапла килсе курни,
Пĕрне-пĕри хисеп туни.
Мĕнле аван чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне.

Ăнса пулсан тырри-пулли —
Ĕçме-çиме сĕтел тулли.
Мĕнле аван чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне.

Тухас килмест çак кил-çуртран,
Килĕштерсе пурăннăран.
Мĕнле аван чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне.

Çĕре-шыва сума сăвар,
Шуçăмпалах ĕçе тухар.
Мĕнле аван чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне.

## ĂНСА ПЫТĂР СУХАМĂР КАССИ

Пурнăçа çĕнетсе пырасси
Килет мар-и пиртен, хамăртан?
Ăнса пырĕ сухамăр касси
Çĕр ĕçне чунтанах юратсан.

Ялăм-йышăм ĕçре туптанни
Çĕклет мар-и хĕрӳ чунăма?
Хал парать çут хĕвел ялкăшни
Малалла çĕкленӳллĕн утма.

Ялăм-йышăм, сана ыр сунса
Ян-ян кайтăр сар кайăк сасси.
Ай ĕçлер-и çанна тавăрса —
Ăнса пытăр сухамăр касси!

## САД ЯНĂРАТЬ САР КАЙĂК САССИПЕ

Эпир ирех тăратпăр ĕç умне...
Хĕвел хĕртет, сапать ай шевлине.
Хирте каш кашласа тыр-пул ӳсет,
Çунатланса хăмла ай ешерет.
Сад янăрать сар кайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

Умра эпир ӳстернĕ çăкасем,
Шăнкăртатса юхан ай çырмасем,
Шур акăшсем иленнĕ кӳлĕсем,
Йăлтăртатса вылян ай çăлкуçсем.
Сад янăрать сар кайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

Ăмăртмалла вĕçеççĕ чĕкеçсем,
Мĕнле хитре вĕсен ай юррисем.
Мĕнле аван, хавас чун-чĕрене,
Тавах çĕршыв-аннемĕр илемне!
Сад янăрать сар кайăк сассипе,
Чун савăнать туссем маттуррипе.

## ТАВАХ СИРЕ, УЧИТЕЛЬСЕМ!

Ытарайми çыннăмăрсем,
Асран кайми учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире
Мĕн ачаран ăс панишĕн,
Анне пекех юратнишĕн, —
Тайма пуç, учительсем, сире!

Ытарайми çыннăмăрсем,
Нихçан манми учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире
Сăпай пулма вĕрентнишĕн,
Ĕçчен пулма хал панишĕн, —
Тайма пуç, учительсем, сире!

Ытарайми çыннăмăрсем,
Пире саван учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире
Мăшăр çунат пилленишĕн,
Çӳл тӳпене çĕкленишĕн, —
Тайма пуç, учительсем, сире!

## ПАРНЕЛЕТĔП САНА ЮРАТУ ЮРРИНЕ

Эп утатăп каçхи укăлча тĕлнелле,
Укăлча тĕлнелле, сирĕн кил еннелле.

Парнелетĕп сана юрату юррине,
Юрату юррине, чун-чĕрем парнине.

Чун савни, яриех уçса яр кантăкна,
Уçса яр кантăкна, кĕтсе ил эс мана.
Парнелетĕп сана юрату юррине,
Юрату юррине, чун-чĕрем парнине.

Эх, хитре çурхи каç — тӳпере çăлтăрсем.
Тӳпере çăлтăрсем, вăйăра çамрăксем.
Парнелетĕп сана юрату юррине,
Юрату юррине — чун-чĕрем парнине!